24-мӗш ҫул тухать. Хакӗ 15 пус.

1942 ЯНВАРЬ 30 ЭРНЕКУН 25(6050) №

Чӑваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧӖН ХАҪАЧӖ.

Паха пуҫарӑва анлӑн сарса пырар

Отечественнӑй вӑрҫӑ фрончӗсенчен пире хаваслантаракан хыпарсем кунсерен килсе тӑраҫҫӗ. Пирӗн чаплӑ Хӗрлӗ Ҫар ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ, пысӑкрах та пысӑкрах ҫӗнтерӳсем туса, нимӗҫ оккупанчӗсене каялла, хӗвеланӑҫ еннелле, паттӑррӑн хӑвалать.

«Пирӗн ҫӗршыв ҫине, ӑна чуралантарас шутпа, сӗмсӗрленсе кӗнӗ нимӗҫ оккупанчӗсене пурне те, пӗр ҫын юлмиччен, пӗтерсе тӑкмалла».

Аслӑ Сталин лартнӑ ҫак задача халӗ ӑнӑҫлӑн пурнӑҫланса пырать. Пирӗн паттӑр Хӗрлӗ Ҫар нимӗҫ захватчикӗсене ҫавӑра-ҫавӑра илсе ҫӗршерӗн, пиншерӗн вӗлере-вӗлере тӑкать.

Тӑшман хытӑ аманчӗ, вӑл пирӗн ҫӗр ҫинче хӑйӗн юнне юхтарать, туллашса, тарӑхса, вӑл каялла чакать. Анчах пӗтмеллипех пӗтмен-ха унӑн вӑйӗ. Тӑшман халь те вӑйлӑ-ха, хаяр тата сӗмсӗр. Вӑл халь хӑйӗн пӗтӗм юлашки вӑйне пухса, Хӗрлӗ Ҫарӑн хӑватлӑ наступленине чарса лартма тӑрӑшать, урса кайса пирӗн ҫарӑн чаҫӗсене хирӗҫ тӑрать.

Пирӗн задача— ӑна сывлӑш ҫавӑрса илме памасӑр малалла хӑваласси, ҫавӑра-ҫавӑра илсе, ӑна хамӑрӑн ҫӗршывӑн территорийӗ ҫинчех пӗтерсе тӑкасси пулса тӑрать. Ҫак чыслӑ задачӑна пурнӑҫлакан Хӗрлӗ Ҫара пирӗн республикӑри колхозсем нумай пулӑшрӗҫ. Эпир Хӗрлӗ Ҫар валли государствӑна ялхуҫалӑх продукчӗсем чылай патӑмӑр. Сӗрпӳ районӗнчи «Цивильстрой» колхозникӗсем пуҫарнипе, пирӗн колхозсемпе колхозниксем хӑйсен, хуҫалӑхӗсенче ятарласах Хӗрлӗ Ҫар валли выльӑхсем ҫитӗнтерсе самӑртаҫҫӗ, государствӑна аш-какай, сӗт-ҫу нумайӑн параҫҫӗ.

Ишлей районӗнчи «Новое Марково» колхозри колхозник Быков юлташ колхозниксен пухӑвӗнче ҫапла каланӑ:

«Хӗрлӗ Ҫар фронтра ҫӗнтерӳ хыҫҫӑн ҫӗнтерӳ тӑвать. Унӑн ҫӗнтерӗвӗсем тата пысӑк пулмалла. Вӑйлатар Хӗрлӗ Ҫара пулӑшассине! Кам мӗн чухлӗ тата мӗн пама пултарать, пӗтӗмпех фронта парар!»

Кам мӗн тата мӗн чухлӗ пама пултарать,—йӑлтах фронтшӑн, ҫӗнтерӳшӗн!

Ҫакӑ вӑл совет ҫыннисен паянхи девизӗ пулса тӑчӗ. Пирӗн республикӑри колхозсемпе колхозниксем, хӑйсен государство умӗнчи парӑмӗсене вӑхӑтра парса татнипе пӗрлех, хӑйсен выльӑх-чӗрлӗхӗсенчен чи лайӑххисене Хӗрлӗ Ҫар валли ҫитӗнтерсе самӑртаҫҫӗ. Сӗнтӗрвӑрри районӗнче 45 ӗне, 300 сурӑх, 130 сысна, 967 кайӑк-кӗшӗк самӑртаҫҫӗ. Калинински районри Калинин ячӗпе тӑракан колхозра, «Цивильстрой» колхозникӗсен чӗнӗвне сӳтсе-явнӑ хыҫҫӑн, колхоз председателӗ Максимов юлташ малтан хӑй Хӗрлӗ Ҫар валли пӗр сурӑх самӑртма пулчӗ. Ун хыҫҫӑн ыттисем—ферма заведующийӗ И. Малов пӗр сысна, колхозник М. Трофимов 2 хур, К. Афанасьев пӗр така самӑртма пулчӗҫ. Колхозра халь 10 сысна, 2 пӑру, 10 сурӑх ҫитӗнтерсе самӑртаҫҫӗ. Калинински районри ытти колхозсенче те нумай колхозниксем хӑйсен хуҫалӑхӗсенче Хӗрлӗ Ҫар валли выльӑхсем ҫитӗнтерсе самӑртма тытӑнчӗҫ. Паянхи кун тӗлне районра пурӗ 15 пуҫ шултӑра выльӑх, 43 сурӑх, 52 сысна, 205 кайӑк-кӗшӗк самӑртаҫҫӗ. Ҫакнашкал тӗслӗхсем пирӗн республикӑра нумай. Пирӗн нумай колхозсемпе колхозниксем кам мӗн чухлӗ тата мӗн пама пултарнине пӗтӗмпех государствӑна парса, нимӗҫ оккупанчӗсене пӗр ҫын юлмиччен пӗтерсе тӑкма Хӗрлӗ Ҫара пулӑшаҫҫӗ.

Ҫапах та ҫак ӗҫ паянлӑха республикӑра куллен массӑллӑн сарӑлса пыраймасть-ха. Хӑшпӗр колхозсенче Хӗрлӗ Ҫар валли выльӑхсем ҫитӗнтерсе самӑртасси ҫинчен пӗр хушӑ калаҫса илчӗҫ те, кайран ӑна пачах манчӗҫ, хӑшпӗр ҫӗрте ку тӗлӗшпе хӑйсем ҫине илнӗ обязательствӑсене те манса каяҫҫӗ. Чылай районсенче ку тӗлӗшпе ӗҫе пуҫарман колхозсем те пур. Ялсовет, колхоз председателӗсем тата район руководителӗсем час-часах ҫак чыслӑран та чыслӑ, пархатарлӑ ӗҫе тивӗҫлипе организацилемеҫҫӗ, ӑна куллен ертсе пымаҫҫӗ.

«Пирӗн колхозниксем, арҫынсемпе хӗрарӑмсем, хӑйсен уйхирӗсенче ывӑнма пӗлмесӗр ӗҫлени, вӗсем фронтпа ҫӗршыв валли тырпул, аш-какай, промышленность валли чӗртавар ытларах та ытларах парса пыни кирлӗ».

Ҫакӑн пек аслӑ Сталинӑн чӗнӗвӗ, ҫакӑн пек хушать ҫӗршыв. Ӑна тимлӗн те хастарлӑн пурнӑҫлар! Нимӗҫ оккупанчӗсене хирӗҫ паттӑррӑн ҫапӑҫакан Хӗрлӗ Ҫара тата ытларах, вӑйлӑнрах пулӑшар! [illegible] ҫи пырар!

Совет Информаци Бюровӗнчен

Январӗн 28-мӗшӗнчи каҫхи пӗлтерӳ

Январӗн 28-мӗшӗнче пирӗн войскӑсем противника хирӗҫ хаяррӑн ҫапӑҫнӑ, ҫапӑҫусенче нимӗҫсен фашистла войскисене чӗрӗ вӑй тӗлӗшпе пысӑк ҫухатусем кӳнӗ тата ҫӗнӗрен малалла куҫса пынӑ.

Январӗн 27-мӗшӗнче нимӗҫсене сывлӑшри ҫапӑҫусенче 12 самолет персе антарнӑ тата аэродромсем ҫинче противникӑн 17 самолетне пӗтерсе тӑкнӑ. Ҫав кун нимӗҫсене мӗнпурӗ 29 самолет пӗтерсе тӑкнӑ. Пирӗн 7 самолет пӗтнӗ.

Январӗн 28-мӗшӗнче Мускав патӗнче нимӗҫсен 2 самолетне персе антарнӑ.

* * *

Январӗн 27-мӗшӗнче пирӗн авиаци чаҫӗсем нимӗҫсен 13 танкне, пехотӑпа груҙсем турттарса пыракан 334 автомашинине, боеприпассем турттарса пыракан 50 ытла лавне, 9 орудине прислугисемпе пӗрлех, зенитнӑй пулеметсен 10 точкине пӗтерсе тӑкнӑ, чугунҫул ҫинчи 2 эшелона вут тивертнӗ, противник пехотин 4 батальонне сапаласа янӑ, вӗсенчен пӗр пайне пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн стрелковӑй часть январӗн 26-мӗшӗнче, противника хирӗҫ хаярррӑн ҫапӑҫса, тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене 300 ҫынна ытла пӗтерсе тӑкнӑ тата 2 оруди, 33 пулемет, 5 миномет тытса илнӗ. Тепӗр участокра Елагин лейтенантӑн подразделенийӗ, штык вӗҫҫӗн атака туса, нимӗҫсене халӑх пурӑнакан пунктран хӑваласа кӑларнӑ та тӑшманӑнне 3 оруди, 6 пулемет, 100 винтовка тата нумай снарядсемпе патронсем тытса илнӗ.

* * *

Б. ялӗшӗн пынӑ ҫапӑҫура Пальгов юлташ командир пулса ертсе пыракан батарея, уҫӑ позицирен персе, тӑшманӑн «психикӑллӑ» 3 атакине сирсе янӑ. Батарейӑри артиллеристсем, картечпа харӑссӑн та тӗл персе, тӑшманӑн салтакӗсемпе офицерӗсене сапаласа янӑ тата 150 ҫынна пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Рыбачев красноармеец нимӗҫсем йышӑнса тӑнӑ яла пуринчен малтан ҫӗмӗрсе кӗнӗ те нимӗҫ офицерне персе пӑрахнӑ тата противникӑн пулемет расчетне стройран кӑларнӑ та станковӑй пулеметне тытса илнӗ.

* * *

Кӗҫӗн лейтенант Есинӑн подразделенийӗ, чакса пыракан тӑшманӑн чаҫӗсен тылӗнче ҫапӑҫса, 4 кун хушшинче тӑшман салтакӗсемпе офицерӗсене 200 ҫынна яхӑн стройран кӑларнӑ, 30 автомашинӑна тата ҫар снаряженийӗ турттарса пыракан темиҫе вуншар лава пӗтерсе тӑкнӑ.

* * *

Мускав облаҫӗн халӗ ирӗке кӑларнӑ районӗсенче кӗрешнӗ партизансен отрячӗсем гитлеровецсене ҫӗмӗрме Хӗрлӗ Ҫара ӑнӑҫлӑн пулӑшса тӑнӑ. П. юлташӑн отрячӗ юлашки 10 кун хушшинче хӑйӗн кӗрешӗвӗнче нимӗҫсен 32 салтакне вӗлерсе пӗтернӗ, тӑшманӑн боеприпассем турттарса пыракан 4 автомашинине тата 2 лавне пӗтерсе тӑкнӑ, пӗр блиндажа сирпӗнтерсе янӑ тата противникӑн телефон линине 31 тӗлте татнӑ. Г. юлташӑн отрячӗ январӗн 17-мӗшӗнче И. ялӗ патӗнче чакса пыракан нимӗҫ войскисене хӳтӗлесе тӑракан тӑшманӑн 2 танкне курнӑ. Партизансем танксем ҫине гранатӑсем ывӑтма пуҫланӑ, танксен экипажӗсене, ҫавӑн пекех тата ҫывӑхра пулнӑ нимӗҫ салтакӗсене пӗтерсе тӑкнӑ. В. юлташӑн отрячӗ январӗн 18-мӗшӗнче халӑх пурӑнакан Н. тата К. пункчӗсем хушшинчи ҫул ҫинче засада тунӑ. Партизансем ҫав кун нимӗҫ салтакӗсене турттарса пыракан грузовой автомашинӑна тата груз илсе пыракан лава пӗтерсе тӑкнӑ. Тӑшманӑн 37 салтакне вӗлернӗ. Ҫакӑн хыҫҫӑн партизансем нимӗҫсен 7 автоматчикне вӗлерсе пӗтернӗ.

* * *

Нимӗҫсен 123-мӗш полкӗнче тӑнӑ взвод командирӗн обер-ефрейтор Кесслерӑн дневникӗнчен илнӗ уйрӑм сыпӑка пичетлетпӗр: «Пире ыйӑхран хӑрушӑ взрывсем вӑратрӗҫ. Пӗтӗм сурт ишӗлсе анчӗ пулӗ тесе шухӑшларӑм эпӗ, анчах та, пирӗн телее, маччапа алӑксем кӑна йӑтӑнса аннӑ. Юнашарах бомбӑсем ӳкнӗ мӗн. Нумай ҫар автомашинисем, пӗр танк тата танкетка ҫунса кайрӗҫ. Боеприпассем сывлӑшалла сирпӗнчӗҫ. Пирӗн обозсене пӗтерсе тӑкрӗҫ, горючи вӑйлӑ ҫулӑмпа ялкӑшать. Татах пиӗ те йывӑр кун, пысӑк ҫухатусем. Манӑн пӗр отделение стройран кӑларчӗҫ. Пулемет расчетне вӗлерсе пӗтерчӗҫ. Тепӗр отделенире 4 ҫын вилнӗ, 7 ҫын аманнӑ».

* * *

Нимӗҫсен 20-мӗш танковӑй дивизийӗн 21-мӗш танковӑй полкӗнчи 9-мӗш ротӑран тыткӑна лекнӗ ефрейтор Эммануил Шмидт ҫапла каласа панӑ: «Германи ҫарӗ каялла чакни час-часах паника пулса каять. Ҫулсем ҫинче эпир колонни-колоннипе машинӑсем, купи-купипе снаряжени, хӗҫпӑшал пӑрахса хӑваратпӑр. Фронт линине план тӑрӑх кӗскетни ҫинчен калаҫни — кулӑшла япала кӑна. Дисциплина кунсеренех чакса пырать. Салтаксем разведкӑна кайма та хурала тӑма та килӗшмеҫҫӗ. Халӗ пирӗнтен никам та Германия ҫӗнтерме пултарассине ӗненмест».

* * *

Харьков облаҫӗнчи Кривцово тата Троицкое ялӗсенче гитлерла бандитсем 54 ватӑ колхознике пӗр ҫӗре пухнӑ та вӗсене пулеметсенчен персе пӑрахнӑ. Ҫав ялсенчех нимӗҫсем 130 киле ҫунтарса янӑ. Вутра хӗрарӑмсемпе ачасем нумай пӗтнӗ.

Январӗн 29-мӗшӗнчи ирхи пӗлтерӳ

Январӗн 29-мӗш ыран тенӗ чух ҫӗрле совет войскисем нимӗҫсен фашистла войскисене хирӗҫ ҫапӑҫса малалла наступлени туса пынӑ.

Пирӗн карапсем Баренц тинӗсӗ ҫинче противникӑн транспортне путарнӑ.

* * *

Селезнев юлташ командир пулса ертсе пыракан пирӗн часть (Хӗвеланӑҫ фрончӗ) юлашки кунсенче тӑшманӑнне 14 танк, 133 автомашина, 62 оруди, 115 пулемет, 17 миномет, 26 радиостанци, 808 винтовка тата ытти тӗрлӗ снаряжени нумай тытса илнӗ. Фронтӑн тепӗр участокӗнче Супрун юлташ командир пулса ертсе пыракан часть нимӗҫсене С. ялӗнчен ҫапса кӑларнӑ, пӗр оруди, 5 станковӑй пулемет, радиостанци, 7 ещӗк патрон тата ытти трофейӑсем тытса илнӗ. Ҫапӑҫу хирӗнче нимӗҫ салтакӗсемпе офицерӗсен 50 вилли выртса юлнӑ.

* * *

Кӑнтӑр-Хӗвеланӑҫ фрончӗн участокӗсенчен пӗринче кӗрешекен пирӗн чаҫӑн боецӗсем противникӑн ҫирӗплетнӗ пунктне ҫӗмӗрсе кӗнӗ. Гитлеровецсем ҫапӑҫуран тухма хӑтланнӑ, анчах вӗсене пирӗн йӗлтӗрҫӗсен отрячӗ, нимӗҫсен тылне аякран ҫавӑрӑнса кӗнӗскер, кӗтсе илнӗ. Ҫав ҫапӑҫура нимӗҫ захватчикӗсем хӑйсен 370 салтакӗпе офицерне ҫухатнӑ. Пирӗн боецсем 6 оруди, 11 пулемет, 4 миномет, 26 автомашина тытса илнӗ. Тыткӑна илнисем пур.

* * *

Нечаев красноармеецӑн оруди расчечӗ, хӑйӗн орудине огневой позицие ситтермесӗр илсе тухса, тӳррӗн персе тӑшманӑн блиндажне, минометсен батарейине тата икӗ станковӑй пулеметне ҫӗмӗрсе тӑкнӑ.

* * *

Левино ялӗшӗн пынӑ ҫапӑҫура красноармеец И. И. Гришов противникӑн вӑйлӑ вут-ҫулӑмӗ айӗнчен тӑшманӑн танкӗ патне шӑвӑнса пынӑ та, танка пӗтермелли граната пӑрахса, машинӑна чарса лартнӑ, кайран вара ҫав танка ҫунакан шӗвек тултарнӑ бутылкӑпа вут тивертсе янӑ.

* * *

Ростов облаҫӗнчи И. юлташ командир пулса ертсе пыракан партизансем ҫак кунсенче нимӗҫсен 3 ҫынтан тӑракан патрульне тыткӑна илнӗ тата нимӗҫ салтакӗсен отрячӗ ҫине пулеметран пенӗ. Противник паникӑна ӳксе, хӑйӗн салтакӗсен темиҫе вуншар виллине пӑрахса хӑварса, тарнӑ.

* * *

Нимӗҫсен 298-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 527-мӗш полкӗнчен тыткӑна лекнӗ ефрейтор Эрбер ҫапла каласа панӑ: «Нумаях пулмасть мӗнпур подразделенисенче Гитлерӑн нимӗҫ войскисене чӗнсе каланӑ секретлӑ хутне вуласа пачӗҫ. Ҫӗнтерсе илнӗ вырӑс территорине юлашки ҫын юлмиччен хӳтлеме тата кирек епле лару-тӑру пулсассӑн та каялла чакмасӑр тӑма чӗннӗ Гитлер. Ҫав чӗнсе калани айне мӗнпур салтаксене тупа тутарса алӑ пустарчӗҫ. Нимӗҫ ҫарӗ пӗтес шӑпа умӗнче тӑнине ӑнланакан салтаксем Гитлер чӗнсе каланине хӑйсен «вилӗм приговорӗ» тесе ят пачӗҫ».

* * *

Нимӗҫсен 267-мӗш пехотнӑй дивизийӗн 467-мӗш полкӗнчи 1-мӗш ротӑран тыткӑна лекнӗ ефрейтор Альберт Швемме ҫапла каласа панӑ: «Пирӗн полкри 1-мӗшпе 2-мӗш батальонсем питех те пысӑк ҫухатусем тӳсрӗҫ. Вӗсене иккӗшне пӗрлештерсе пӗр батальон турӗҫ, 3-мӗш батальона вара пӗтӗмпех ҫапса аркатнӑ. Пирӗн мӗнпур ротӑран стройра 25 салтак кӑна тӑрса юлчӗ, ыттисем вилнӗ, аманнӑ е тӑм илтерсе янӑ».

* * *

Словакире «Хӗвелтухӑҫ фронтӗнчи салтаксене пулӑшма» тесе тиртен тата ҫӑмран тунӑ мӗнпур япаласене, кӗрӗксемпе сӑран пальтосене обязательнӑй йӗркепе памалли ҫинчен распоряжени пичетлесе кӑларнӑ. Ӑшӑ япаласем паман словаксене гитлеровецсем арестлеҫҫӗ, штрафсем тӳлеттереҫҫӗ, ҫав ҫынсен килти япалисене нимӗҫсен полицийӗ валли конфискацилеҫҫӗ.

* * *

СССР Наукӑсен Академийӗн член-корреспондент Д. М. Чижиков ертсе пыракан комиссийӗ, Уралри икӗ пысӑк заводӑн уйрӑм агрегачӗсемпе цехӗсен ӗҫне тӗпчесе тухса, ҫӗнӗ мероприяти тума палӑртнӑ. Ку мероприяти кӑҫалхи ҫул ҫав предприятисенче хальхи оборудованисемпе ӗҫлесех никель, пӑхӑр тата кӳкӗрт 1941 ҫултинчен икӗ хут ытларах илме май парать.

Агитаторсен халӑх хушшинчи авторитечӗшӗн

КАНАШ. Партин хулари пуҫламӗш организацийӗсенчен чылайӗшне агитаци ӗҫне туса пыма уйрӑм участоксем ҫирӗплетсе панӑ. Хӑшпӗр агитколлективсем хӑйсен участокӗсенче чылаях лайӑх ӗҫлеҫҫӗ.

Акӑ 1-мӗш номерлӗ вӑтам шкул ҫумӗнчи агитколлектива илер. Кунти агитколлективра 22 ҫын тӑрать, вӗсем хушшинче виҫӗ коммунист, виҫӗ комсомолец, ыттисем—партире тӑман учительсем. Ҫак 22 агитатор августӑ уйӑхӗнчен пуҫласа хӑйсене уйӑрса панӑ участокра калаҫусемпе вулавсем тӑтӑшах туса ирттереҫҫӗ. Вӗсем отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑпа ҫыхӑнса тӑракан пӗр событие те халӑх хушшинче тӗплӗн ҫутатса памасӑр хӑвармаҫҫӗ. Агитаторсем хӑйсен участокӗсене кун сиктерсех пырса тӑраҫҫӗ. Сталин юлташ ноябрӗн 6-мӗшӗнче Мускав Совечӗн чаплӑ ларӑвӗнче тунӑ докладран тухса тӑракан задачӑсене пурнӑҫа кӗртме килхуҫи хӗрарӑмӗсене, хӑйсен участокӗнчи мӗнпур ӗҫҫыннисене мобилизацилеҫҫӗ.

Ҫак агитколлективран уйрӑмӑнах Тихоновӑпа Лукишова агитаторсен ӗҫӗсене палӑртмалла. Агитатор Тихонова юлташ фронта пулӑшас тӗлӗшпе пысӑк ӗҫсем организациленӗ. Унӑн участокӗнчи 6 ҫуртра пурӑнакансем пурте пекех фронтри боецсем валли ӑшӑ тумтирсем пухас ӗҫре хӑйсен активлӑхне кӑтартаҫҫӗ. Тихонова юлташ хӑй участокӗнче пурӗ 488 тенкӗлӗх ӑшӑ тумтир пухса панӑ. Лукишова юлташ — 288 тенкӗлӗх пухнӑ.

Канашри парткабинета ку таранччен килхуҫи хӗрарӑмӗсенчен лекцисене итлеме ҫӳрекен пулман. Агитколлектив членӗсем ӑнлантару ӗҫне лайӑх туса пынипе Тихоновӑпа Лукишова юлташсем хӑйсен ҫыннисене лекцисем итлеме ҫӳремешкӗн явӑҫтарчӗҫ. Халӗ парткабинета лекцисем итлеме килхуҫи хӗрарӑмӗсем 30—40 ҫын таран ҫӳреҫҫӗ, вӗсем ҫӗршыв умӗнче тӑракан задачӑсемпе интересленеҫҫӗ.

Юлашки вӑхӑтра агитколлектив (унӑн руководителӗ С. Иванова) Калинин юлташӑн ҫӗнӗ ҫул ячӗпе тухса каланӑ сӑмахне тата Молотов юлташӑн нотине ӑнлантарса парас тӗлӗшпе ӗҫлерӗ. Коллектив агитучастокра 3 номер стена хаҫачӗ кӑларнӑ тата ҫӗнӗ хыпарсен витринине организациленӗ.

Хулари ытти агитколлективсем ҫителӗксӗртерех ӗҫлеҫҫӗ. Сӑмахран, хула совечӗн исполкомӗ ҫумӗнчи коллектива илер. Коллективра 15 ҫын шутланать. Анчах та унӑн руководителӗ Шайбина юлташ коллектива кирлӗ пекех ертсе пымасть. Ҫавӑнпа та ку коллективри агитаторсен халӑх умӗнче авторитечӗ ҫук-ха. Шайбина юлташ хӑй коллективӗнчи агитаторсене участокра хапӑлласах йышӑнманни пирки ӳпкелешет, анчах та ку мӗнрен килнине вӑл хӑй те халиччен ӑнланман.

«Авангард» промартель ҫумӗнчи агитколлектив (руководителӗ М. Степанов) ӑнлантарулла ӗҫе те сахалтарах туса пынӑ. Ҫапах та унӑн агитаторӗсем фронта пулӑшассине организацилес тӗлӗшпе пӗлсе ӗҫлеҫҫӗ. Агитаторсем хӑйсен агитучастокӗнчи ҫынсене тӗрлӗрен ӗҫсене явӑҫтарнӑ, Хӗрлӗ Ҫар валли ӑшӑ тумтир пухас тӗлӗшпе чылай ҫитӗнӳсем тунӑ, 2 тоннӑна яхӑн тимӗр-тӑмӑр пухса панӑ тата ыт. те. Ҫак ҫитӗнӳсене пӗтӗмпех килхуҫи хӗрарӑмӗсем хутшӑнса ӗҫленипе тунӑ.

Ҫак кунсенче партин Канаш райкомӗн бюровӗ районри агитколлективсен ӗҫӗсене пӑхса тухрӗ. Бюро, хулари 1-мӗш №-лӗ вӑтам шкулпа «Авангард» промартель ҫумӗнчи агитколлективсен ӗҫӗсене ырласа, пурне те ҫавсемпе танлашса ӗҫлеме хушрӗ.

И. КОРНИЛОВ.

Пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ

КАНАШ. Канмалли кун пулин те, вагонсем юсакан цехри Мосинпа Скрынник юлташсен бригадисем цеха пычӗҫ. «Эпир уйӑхри планран ирттерсе пӗрер вагон юсама пулнӑ, эпир ҫавна тума тивӗҫ»—ҫапла пулнӑ вӗсен ӗмӗчӗ. Ҫамрӑк патриотсем, вагон ҫумӗнчен кунӗпех уйӑрӑлмасӑр ӗҫлесе, хӑйсен ӗмӗтне пурнӑҫларӗҫ.

Тимӗрҫӗ цехӗн коллективӗ вӑрҫӑ пуҫланнӑранпах пысӑк тухӑҫлӑхпа ӗҫлет. Кунта нормӑна тултарман рабочисем ҫук та, нумайӑшӗсем нормӑна ытлашшипех тултараҫҫӗ. Двухсотниксемпе трехсотниксем те сахал мар. Чаплӑ тимӗрҫӗсене Миронов, Толубаев, Дюжов, молотобоецсене Савельев, Харченко, Никитин, резчиксем Лашманов, Черкас юлташсене илсен, вӗсем кашни кун виҫ-тӑватшар норма тӑваҫҫӗ.

Федин тимӗрҫӗн пӗр вырӑнта тӑрас, тунӑ ӗҫпе чарӑнас йӑла ҫук. Унӑн ӗмӗчӗ—малалла. Ахальрен мар ӗнтӗ ӑна цехра «пирӗн малта пыракан» теҫҫӗ. Федин халь васкавлӑ заказсене пурнӑҫлать. Ӗҫре ҫӗнӗрен ҫӗнӗ майсем шырать. Нумаях пулмасть вӑл пӗрремӗш номерлӗ детальсене туса кӑларас ӗҫе хӑвӑртлатмалли майсем тупрӗ. Ҫапла вӑл сменӑри ӗҫ тухӑҫлӑхне виҫӗ хут ытла ӳстерчӗ. «Фронт пире кӗтмест, фронт ыйтнине вӑхӑтра парас пулать», тет вӑл.

Инструментальнӑй цехри тӗрлӗрен детальсене якатакан Николаев юлташ, гайкӑсене касакан Федорова, сверлосене тӳрлетекен Гатин, пуансонсене хӗртекен Смирнов юлташсем те вӑрҫӑ вӑхӑтӗнчи тухӑҫлӑхпа ӗҫлеҫҫӗ. Вӗсем кулленхи нормӑна 250 процентран пуҫласа 375 процент таран тултараҫҫӗ.

Утиль-цехри комсомолец-строгальщик Павлюк юлташ вӑрҫӑн малтанхи кунӗсенчех ӗҫе ҫӗнӗлле тытӑннӑ. Ҫамрӑк строгальщик ӗҫ вырӑнне ҫӗнӗлле йӗркеленӗ, вӑхӑта сехетпе мар, минутӑпа, секундӑпа виҫнӗ. Ҫӗнӗ майсем шырани, вӑхӑтпа туллин усӑ курса тата пур вӑйпа ӗҫлени Павлюк юлташа ӗҫ тухӑҫлӑхне тепӗр хут ӳстерме пулӑшнӑ. Июнь уйӑхӗнче вӑл кулленхи нормӑна 150 процент тултарса пынӑ пулсан, халӗ 300-шер процент тултарать.

Фединпа Павлюк пек рабочисем заводра пӗрерӗн мар, вуншарӑн шутланаҫҫӗ. Вӗсен пурин те пӗр ӗмӗт, пӗр тӗллев—Хӗрлӗ Ҫара мӗн кирлине пурпе те хӑвӑрт туса парасси.

Т. ИВАНОВ.

Кросра малти вырӑна тухассишӗн

КАЛИНИНО. Профсоюз членӗсемпе комсомолецсен Хӗрлӗ Ҫар 24 ҫул тултарнӑ ятпа пулакан кросне ирттерме хатӗрленес ӗҫ районра хӗрӳллӗн пырать.

Кроса ирттерме уйӑрнӑ районри оргкомитет (председателӗ ВЛКСМ райкомӗн секретарӗ И. А. Кадыков юлташ) ку тӗлӗшпе чылай ӗҫсем турӗ. Колхозсенчи ҫамрӑксене, шкулсенчи учительсемпе вӗренекенсене кроса йышлӑн явӑҫтарас тӗлӗшпе ялсемпе шкулсенче ятарласа уйӑрнӑ агитаторсем ӗҫлеҫҫӗ.

Педучилище ҫумӗнче консультаци ӗҫне йӗркеленӗ. Военрук С. Матвеев юлташ кроса хатӗрленсе ирттерес енӗпе ӗҫлеме училищӗре 18 комсомолеца ятарласа вӗрентсе кӑларнӑ. Унсӑр пуҫне ку ӗҫе всевобуч йӗркипе «отлично» тата «хорошо» паллӑсемпе вӗренсе пынӑ, ПВХО нормисене парса пӗтернӗ 34 учителе явӑҫтарнӑ. Халӗ вӗсем ялсенчи тата райцентрти военнообязаннӑйсемпе шкул ачисене пурне те кроса явӑҫтарас тӗлӗшпе агитациллӗ-массӑллӑ ӗҫ туса пыраҫҫӗ.

Педучилище коллективӗ кроса ирттерме 6 взвод тунӑ. Вӗсем 3 хутчен 10 километрлӑ [illegible] кроса пурӗ 253 ҫын хутшӑнать. [illegible] Кроса хатӗрленнӗ май 80 вӗренекен ГТО значокӗн хӗллехи нормине панӑ. Взводпа взвод кросра малти вырӑна тухассишӗн ӑмӑртаҫҫӗ.

Калининӑри вӑтам шкулта та (директорӗ комсомолец Н. Гурьянов юлташ) кроса хӗрӳллӗн хатӗрленеҫҫӗ. Ҫак коллективран кроса 150 ҫын хутшӑнать. Вӗсем кулленех тренировкӑсем туса ирттереҫҫӗ.

Колхозсенчи комсомол организацийӗсем те кроса хутшӑнма хатӗрленеҫҫӗ. Комсомолӑн Ҫавалкассинчи пуҫламӗш организацийӗ (секретарӗ К. Корнилов юлташ) 22 ҫынран команда организациленӗ. Командӑна икӗ отделение уйӑрнӑ. Отделенипе отделени пӗр-пӗринпе ӑмӑртаҫҫӗ. Комсомолецсемпе ҫамрӑксем, кроса активлӑн хутшӑнас тесе, хӑйсем 18 мӑшӑр йӗлтӗр тунӑ. Кулленех вӗсем тренировка тӑваҫҫӗ. 10 километрлӑ поход виҫӗ хутчен туса ирттернӗ.

Районра малта пыракан Кӑмбалри «Новый путь» колхозра та кроса тимлесех хатӗрленеҫҫӗ. Кроса хатӗрленме колхозра инструктор-тренер уйӑрнӑ. Ҫынсене кроса анлӑн явӑҫтарас тӗлӗшпе командир И. Штыков юлташ колхозри ҫамрӑксемпе калаҫусем ирттерет.

— Кроса кӑҫал та, пӗлтӗрхи пекех, малти вырӑна тухассишӗн, — тет И. Штыков юлташ.

М. ЯСТРАН.

Хӗрӳллӗн хатӗрленеҫҫӗ

ШАМАРША. Пӑчӑрлӑ-Пашъел ялсоветӗнчи рабочисемпе колхозниксем тата служащисем всевобуч енӗпе ҫар ӗҫне хӗрсех вӗренеҫҫӗ.

Отделени командирӗ Георгий Семенович Борисов боецсене питех те тӑрӑшса вӗрентет. Боецсем, пурне те вӑрҫӑ ӗҫне вӗрентни пирӗн оборонӑн вӑй-хӑватне ҫирӗплетме пулӑшнине ӑнланса илсе, занятисене пӗр кун сиктермесӗр ҫӳреҫҫӗ. Вӗсем кӗске вӑхӑтрах ҫар стройне, винтовкӑн пайӗсене тата Хӗрлӗ Ҫарӑн дисциплинарнӑй уставне вӗренсе ҫитрӗҫ. Халь боецсем штыкпа ҫапӑҫма, вӑрҫӑ тактикине, боевой винтовкӑран тӗл пеме, граната ывӑтма тата химиллӗ тапӑнуран сыхланма вӗренме тытӑнчӗҫ.

Боецсем хушшинче дисциплина ҫирӗп. А. Толмачев, В. Архипов, Н. Семендеев тата П. Кудряшов боецсем, вӑрҫӑ ӗҫне уйрӑмах лайӑх вӗренме тӑрӑшнипе, ытти боецсемшӗн пример пулса тӑраҫҫӗ.

Занятисенче ҫирӗп дисциплина ҫынна таса сывлӑш кирлӗ пулни пекех кирли ҫинчен пурте пӗлеҫҫӗ. Ҫавна астуса, дисциплинӑшӑн кашни боецӑн кӗрешмелле. Анчах хӑшпӗр боецсен дисциплини япӑх. Сӑмахран, больницӑра [illegible]

Ф. КРАСНОВ.

Ҫӗнӗ цехсем организациленӗ

ШАХАСАН. ССР Союзӗн Халӑх Комиссарӗсен Совечӗпе ВКП(б) Центральнӑй Комитечӗ «Вырӑнти чӗртавартан куллен кирлӗ таварсем туса кӑларассине ӳстермелли мероприятисем ҫинчен» йышӑннӑ постановление Шӑхасанти «Сталь» промартель кӑтартуллӑн пурнӑҫа кӗртсе пырать. Отечественнӑй аслӑ вӑрҫӑ пуҫланнӑранпа вырӑнти промышленноҫа ӳстерес, куллен кирлӗ таварсем ытларах туса кӑларас тӗлӗшпе промартель членӗсем хӑйсен ӗҫне вӑрҫӑ вӑхӑтне тивӗҫлӗ пек урӑхлатса ҫӗнетрӗҫ. «Сталь» промартель 1941 ҫулти плана ытлашшипех тултарчӗ. Планран ирттерсе 9 пин тенкӗлӗх продукци пачӗ.

Промартельре таварсем ытларах туса кӑларассишӗн, Хӗрлӗ Ҫара вӑй ҫитнӗ таранах пулӑшу парса пырассишӗн рабочисем хушшинче социализмлӑ ӑмӑрту сарӑлсах пырать.

Промартельре стахановецсен йышӗ кунран кунах ӳсет. Ҫӗвӗҫсем Н. Кузьмина, Н. Петрова, Т. Григорьева, П. Иванов, М. Яковлева тата В. Григорьева юлташсем кулленхи нормӑна 200—300 процент таран тултарса ӗҫлеҫҫӗ. Стахановка Н. Кузьмина юлташ кашни кун планпа 8 кӗпе ҫӗлес вырӑнне 30—35 кӗпе ҫӗлесе хатӗрлет.

— Пирӗн халь ӗҫ тухӑҫлӑхне татах та ӳстермелле. Мӗнпур ӗҫе фронт интересӗсене пӑхӑнтармалла. Пирӗн кашнин 4—5 ҫын вырӑнне пӗччен ӗҫлесе ҫитермелле. [illegible] 450 процентран кая мар тултарса пырать. Вӑл сменӑра 3 ҫӗлӗк ҫӗлес вырӑнне 15—20 ҫӗлӗк ҫӗлет. Вӑл, пирӗн мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫарӑн чаплӑ ҫӗнтерӗвӗсемпе хавхаланса, татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме пулать.

Ҫӗвӗ ҫӗлекен цехсен бригадирӗсем Андреев, Исаков юлташсем хӑйсен ӗҫӗсене аван организациленӗ. Вӗсем цехри рабочисене лайӑх ӗҫ условийӗсем туса парассишӗн тӑрӑшаҫҫӗ, вӗсене ӗҫре пулӑшаҫҫӗ. Ҫавӑнпа пӗрлех хӑйсен кулленхи нормисене те ирттерсе тултараҫҫӗ.

Промартель кӑҫал татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлесе Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем валли ӑшӑ тумтирсем ытларах хатӗрлеме, ҫулталӑк планне икӗ-виҫӗ хут ирттерсе тултарма обязательство илчӗ.

— Хальхи вӑхӑтра пирӗн мухтавлӑ Хӗрлӗ Ҫар боецӗсем тунӑ чаплӑ ҫӗнтерӳсем пире чӗререн савӑнтараҫҫӗ, ӗҫре ҫӗнӗрен те ҫӗнӗ ҫитӗнӳсем тума хавхалантараҫҫӗ. Эпӗ хамӑн нормӑна 500 процент таран тултарса ӗҫлетӗп пулсан, малашне татах та тухӑҫлӑрах ӗҫлеме, 7—8 ҫын ӗҫлес нормӑна пӗччен тултарса пыма пулатӑп. Пирӗн пархатарлӑ ӗҫсем тӑшмана хӑвӑртрах ҫапса аркатма пулӑшаҫҫӗ,—тет Степанов юлташ.

Халь промартель фронта ытларах пулӑшас тӗлӗшпе ӗҫлет, ӗҫҫыннисен заказӗсене те вӑхӑтра пурнӑҫласа пырать. Вырӑнти промышленноҫа ӳстерес, куллен [illegible]

В. ЯКОВЛЕВ.

Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчи ĕçсем çинчен ютçĕршыв хаçачĕсем мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче нимĕçсем поражени тÿсни çинчен çырнисем кунти хаçатсенче çаплах паллă вырăн йышăнса тăраççĕ. Хаçатсем кашни кунах Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фрончĕн карттисене пичетлесе кăлараççĕ. Америкăн Бернри тата Стокгольмри корреспонденчĕсем Хĕрлĕ Çар Германи войскисен Осташковпа Селижарово районĕнчи фронтне татса кĕнине нимĕçсем пытарса тăма хăтланнинчен тăрăхласа кулаççĕ.

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин вăрçă ĕçĕсен обозревателĕ, Хĕрлĕ Çар тунă çĕнтерÿсене кăтартса парса, çав çĕнтерÿсем Берлинран саракан пропагандăна — «нимĕçсем хăйсен фронт линине тикĕслес тĕлĕшпе çеç чакаççĕ» тесе суйнине тăрă шыв çине кăлараççĕ, тесе çырать. Хĕрлĕ Çар çĕнĕрен малалла куçни, Совет Союзĕ çĕнĕ çĕнтерÿсем туни хĕл условийĕсенчен мар, Хĕрлĕ Çарăн çапăçури пултарулăхĕнчен килет; Хĕрлĕ Çар хĕçпăшал тĕлĕшпе те, çĕр вăй тĕлĕшпе те вăйлă, унăн резервĕсем пысăк, тесе çырать «Нью-Йорк таймс» хаçатăн редакторĕ Джеймс. Гитлер вырăс çарне тĕппипех пĕтерсе тăкни çинчен пĕлтернĕччĕ,—тет малалла Джеймс,—анчах та халĕ вырăссен çарĕ Гитлер Россия çине тапăнса кĕнĕ вăхăтринчен вăйлăрах.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн Бернри корреспонденчĕ çапла çырать: Хĕрлĕ Çар Можайск районĕнче, Çурçĕр-Хĕвеланăç тата Калинин фрончĕсенче тунă çĕнĕ çитĕнÿсем вырăссене малалла татах та ăнăçлăрах наступлени тумалли майсем параççĕ.

«Нью-Йорк таймс» хаçатăн Мускаври корреспонденчĕ Паркер Хĕрлĕ Çарăн пур йывăрлăхсене те çĕнтерме пултаракан пысăк хавхаланулăхĕ пурри çинчен калать. Хĕрлĕ Çар, тет Паркер, ăшă тумтирпе тумланнă тата квалификациллĕ медицина пулăшăвне те аван илсе тăрать. Çакăнпа пĕрлех Паркер, Хĕрлĕ Çарти политикăллă ĕçе лайăх йĕркеленине пысăк хак парса, кашни красноармеец хăй мĕншĕн çапăçнине аван пĕлсе тăрать, тесе çырать.

СТОКГОЛЬМ, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Стокгольмра тухакан хаçатсем пурте совет войскисен Çурçĕр-Хĕвеланăç тата Калинин фрончĕсенчи çĕнтерĕвĕсем çинчен хăйсен пĕрремĕш страницисенче пичетлесе кăлараççĕ. «Дагенс нюхетер» хаçатăн вăрçă ĕçĕсене пăхса тухакан статьинче Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнчи нимĕçсен ĕçĕсем йывăр кăна мар, хăрушлăхра тăраççĕ, тесе кăтартса панă.

Коннэли Питсбургра тухса калани

ВАШИНГТОН, январĕн 27-мĕш. (ТАСС). Сенатăн ютçĕршыв ĕçĕсен комисси председателĕ Коннэли Питсбургра сăмах тухса каланă. Гитлер Россия çине ултавлăн пырса тапăнса çăмăл çĕнтерÿ тума ĕмĕтленнĕ, — тесе пĕлтернĕ Коннэли хăйĕн сăмахĕнче. Анчах та хăйсен тăван çĕршывне юратакан вырăссем, хăюллăн та паттăррăн кĕрешсе, Гитлерăн çарне Мускав стенисем патĕнче чарса лартрĕç, унтан вара гитлеровецсене каялла сирсе ывăтса, поражени тÿсес шăпа умне тăратрĕç.

Вырăссем—Наполеона хăваласа кăларакансен тата Карл XII короле çĕнтерекенсен ăрăвĕсем — хальхи вăхăтра хăйсен тăван çĕрĕ çинче хăйсен хăрушăсăрлăхĕпе никама пăхăнманлăхне пăснă тискер тăшмана паттăррăн, вилĕмрен хăрамасăр çапа-çапа аркатаççĕ.

Швеци хаçачĕ совет халăхĕ нимĕç захватчикĕсене тавăрасси çинчен

СТОКГОЛЬМ, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). «Гетеборгс хандельстиднинг» пичетлесе кăларнă статьяра Германия тунă тискер йăйăкла ĕçсене совет халăхĕ ĕмĕрне те манас çукки çинчен тупа тунине кăтартса панă. Халĕ Гитлер пусмăрĕ айĕнче пурăнакан ытти пур çĕршывсенче те çавăн пекех тупа тăваççĕ,—тесе çырать малалла хаçат.—Балканри çĕршывсен халăхĕсем, чехсем, поляксем, французсем, голландецсем, бельгиецсем, норвежецсем—вĕсем пурте хăйсем мĕн чăтса тÿснине пĕтĕ çирĕп асра тытаççĕ.

Рейхенау приказĕ тăрăх, нимĕçсем мирлĕ халăх хушшинче арçынсене шĕтерес тĕлĕшпе питĕ тискер меслетсемпе усă кураççĕ. Çапла вара вĕсем хăйсене хирĕç арçынсем кĕрешес хăрушлăха пĕтерсе хума шутлаççĕ. Çав приказ мĕнпур чун-чĕрене çÿçентерет.

— Вырăссен пĕтĕм халăхĕ гитлеровецсене мĕнле айăпланине, — тесе çырать малалла хаçат,—ютçĕршыв Ĕçĕсен Халăх Комиссарĕн Молотовăн нотинче кăтартса панă. Вырăссем захватчиксене вĕçĕ-хĕррисĕр курайманçĕ. Халĕ ĕнтĕ вĕсем нимĕçсене каялла хăваласа тыраççĕ. Гитлерăн çарĕ поражени тÿсни Германия пусмăрланă мĕнпур халăхсене кĕрешÿве çĕклемелли сигнал пулса тăрать. Вĕсем çĕкленĕç те хăйсен асапĕсемшĕн тавăрма тытăнĕç.

Пухăнса çитнĕ тарăхупа çилĕ,—тесе çырать хаçат,—мĕнпур сăнчăрсене татса ывăтĕç. Çил акаканĕ çил-тăвăл вырса илĕ.

„Гетеборгс хандельстиднинг“ хаçат Швецири хаçатсене ССР Союзĕ çинчен тĕрĕссине çырма хушать

СТОКГОЛЬМ, январĕн 27-мĕш. (ТАСС). «Гетеборгс хандельстиднинг» хаçат хăйĕн Стокгольмри корреспонденчĕн Виктор Винде статьине пичетлесе кăларнă. Çав статьяра автор Швецире тухса тăракан хаçатсем Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтĕнче пулса пыракан событисене пĕр енчен çеç, ССР Союзĕшĕн лайăх мар енчен çутатнине ÿкпелесе кăтартса парать.

— Совет Союзĕпе Германи хушшинче вăрçă пуçлансанах Швецире тухса тăракан хаçатсемпе Швецири обществăллă шухăш Германи çарĕн ресурсĕсене ытлашши пысăк хак пани, вырăссен оборона пултарулăхне çителĕксĕр хаклани йăнăш пулнине тепĕр хут аса илтерме кирлĕ те мар ĕнтĕ, — тесе çырать Винде.—Çавăн пек йăнăш хак пани ĕнтĕ, тесе палăртать автор, мĕнпур Европипех вырăссене хирĕç туса пынă пропагандăн результачĕ çеç пулса тăрать. Ку вăл — вырăссен стройĕ çине çеç мар, тата мĕнпур вырăссем çине те мĕн ĕлĕк-авалтанпах тĕшмĕшле пăхнин результачĕ пулса тăрать. Малтан хакланин йăнăшĕ палăрнă хыççăн ку тĕлĕшпе мĕнле те пулин улшăну пуласса шаннăччĕ, анчах та нимĕнле улшăну тавраш̆ те пулмарĕ.

Малалла Винде çапла кăтартса парать: «Швецири вулакансене Совет Союзĕ çинчен çакăн пек суя шухăшсемпе тăтăшах лăпкаса пыни сиенлĕ те пулма пултарать. ССР Союзĕ çинчен панă суя информацисем вулакансене хаçатсенче çырнине ĕненме пăрахтарма, е обществăллă шухăша хăйĕн иллюзийĕпе тĕттĕмлĕхĕнчен вăранса хальхи йĕркешĕн кăмăллă мар пуласси патне илсе çитерме пултарать. Тĕрĕс фактсемпе суя шухăш-кăмăлсене пĕрпĕринчен уйăрса илме пĕлмелле. Швеци çынни вăрçа хутшăннă кирек епле çĕршыва та кăмăлламасăр пултарать. Вырăссен политикĕсемпе полководецĕсене те, Америка политикĕсемпе полководецĕсене критикăланă пекех, критикăлама пулать. Анчах та объективнăй хаçатсемшĕн фактсене урăхлатни килĕшет-ши вара?» «Швецире тухса тăракан хаçатсен, — тесе вĕçлет хăйĕн статьине автор,—шведсен ĕмĕрхи тĕшмĕшлĕхĕсене вăйлатса ыйма кирлĕ мар, вĕсене пусарса пымалла. Çакна ĕнтĕ, пĕтĕмĕшпе илсен, вырăссен пурнăçне объективно çутатса парсан çеç тума пулать».

Германин Францири гарнизонĕсенчен салтаксем тараççĕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин Цюрихри корреспонденчĕ çапла пĕлтерет: юлашки вăхăтра нимĕçсен Францире тăракан салтакĕсем час-часах Францирен Швейцарие тарса каяççĕ. Дезертирсенчен пĕри корреспондента çапла каланă: нимĕçсем хăйсен Францире тăракан войскисенчи çамрăкрах салтаксене ватăрах салтаксемпе улăштарчĕç. Çамрăкрах салтаксене пурне те Совет Союзĕпе Германи хушшинчи вăрçă фронтне ячĕç. Унсăр пуçне тата нимĕçсем Францире тăракан хăйсен гарнизонĕсене чылай чакарчĕç. Корреспондент пĕлтернĕ тăрăх, Германи дезертирĕсем Швейцари чикки урлă массăллăн каçса тăнипе Швейцари влаçĕсем шикленсе ÿкнĕ. Çав дезертирсем, гестапо агенчĕсем тытассинчен хăраса, Швейцари çар влаçĕсене парăнаççĕ.

Германире интеллигентсене хĕсĕрлеççĕ

СТОКГОЛЬМ, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Германин «Национальцейтунг» хаçачĕ интеллигенцие питĕ вăрçса, хăратса çырнă статья пичетлесе кăларнă. Хаçат çапла çырнă: «Германире «интеллигент» сăмаха тĕшмĕшле лайăх мар ăнланаççĕ. Эпир час-часах унпа вăрçнă чухне усă куратпăр. Пирĕн ун пек тума право та пур: вăрçă хыççăн эпир тытса тăма хатĕрленекен территорисенче тăрса юлнă сахал интеллигентсене е çĕнĕлле воспитани парса улăштарăпăр, е тĕппипех пĕтерĕпĕр», тенĕ.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

АНГЛИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 27-мĕш. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи пĕрлештернĕ командованийĕ кăларнă коммюникере çапла кăтартса панă: январĕн 25-мĕшĕнче союзниксен пĕрлештернĕ сывлăш-çар вăйĕсем Японин Макасан портĕнчи çар карапĕсене хирĕç çапăçнă. Англин «Вĕçекен крепость» текен самолечĕ Японин пысăк транспортне путарнă. Кунсăр пуçне пĕр крейсер çине бомбăсем тĕл лекнине палăртнă.

Çакăнпа пĕр вăхăтрах Голланди Индийĕн бомбардировщикĕсем Япони карапĕсене атакăланă. Японин икĕ крейсерĕпе пĕр транспорчĕ çине 4 бомба тĕл тивнине палăртнă.

Америкăн тинĕсри вăйĕсем Япони карапĕсене атакăланă. Япони карапĕсем çине тупăсенчен персе сиен кÿнисĕр пуçне, 5 торпеда тĕл тивнине палăртнă.

Юлашки 24 сехет хушшинче Японин ытлах йышлă мар самолечĕсем питĕ анлă территори талкăшĕнче вĕçсе çÿренĕ.

ЛОНДОН, январĕн 27-мĕш. (ТАСС). Англин Сингапурти командованийĕ кăларнă коммюникере çапла кăтартса панă: январĕн 26-мĕшĕнче Англи авиацийĕ Эндао районĕнче (Малайăн хĕвелтухăçĕнчи çыранĕ) Япони суднисен караванне питĕ вăйлăн атакăланă пулин те, Япони войскисен çав районра десант антарма май килнĕ. Англи авиацийĕ Япони суднисем çине тапăннă чухне Японин крейсерĕ çине пĕр бомба, войскăсем тиесе пыракан транспортсем çине 12 бомба тĕл тивнине палăртнă. Япони войскисене çыран хĕррине антаракан баржăсем çине пулеметсенчен пенĕ тата çыран хĕрринчи оборонăн чаçĕсем те вĕсене питĕ хаяррăн хирĕç тăнă. Японин 12 самолетне персе антарнă, темиçе самолетне сиен кÿнĕ.

Англин Рангунри командованийĕ кăларнă коммюникере кăтартса панă тăрăх, Японин 40 яхăн самолечĕ Рангун çине тапăнма хăтланса пăхнă. Америка истребителĕсем вĕсен çулне пÿлнĕ те Японин 3 самолетне персе антарнă. Америка авиацийĕ çухатусем туман. Англин авиацийĕ тăшман территорийĕ тĕлĕнче разведка туса вĕçсе çÿренĕ.

Мельбурнран илнĕ сведенисем тăрăх, Японин войскисем Гух утравĕ çине (Соломон утравĕсем) анса юлнă.

Январĕн 26-мĕшĕнче Япони авиацийĕ Çĕнĕ Гвинея утравĕнчен çурçĕр-хĕвелтухăç еннерехри Муан утравĕ çине бомбăсем пăрахнă.

АМЕРИКА ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 27-мĕш. (ТАСС). Америкăри Пĕрлешÿллĕ Штатсен тинĕс министерствин коммюникинче Америкăн тинĕсри вăйĕсем Японин карапĕсене Макасан портĕнче ăнăçлăн атакăлани çинчен кăтартса панă. Противникăн миноносецĕсемпе транспорчĕсене тĕл пырса тивнине палăртнă. Америка карапĕсене мĕн чухлĕ сиен пулнине халĕ тĕпчесе пĕлме май килмест пулин те, вăрçă ĕçĕнче пысăк результатсем пулни паллă. Америкăн подводнăй лодки Японин авианосецне атакăланă. Авианосец путнă пулĕ тесе шутлаççĕ. Кунсăр пуçне Америкăн торпеднăй катерĕ Субин заливĕнче (Филиппинра) противникăн 5.000 тонна водоизмещениллĕ суднине атакăланă.

ГОЛЛАНДИ ИНДИЙĔН ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ЛОНДОН, январĕн 27-мĕш. (ТАСС). Голланди Индийĕн командованийĕ кăларнă коммюникере çапла каланă: Японин хĕçпăшаллă вăйĕсем Голланди Индийĕн чылай районĕсенче хăйсен активлăхне кăтартаççĕ. Анчах та вĕсем ниепле паллă результатсем те тăвайман-ха.

Голланди Индийĕн подводнăй лодкисем Макасан проливĕнче Япони карапĕсене çĕрле атакăланă та Японин пĕр миноносецне путарнă. Япони крейсерĕ çине те торпеда тĕл тивнине палăртнă. Анчах та, подводнăй лодкăна хăйне те Япони карапĕсем тапăннă пирки, крейсер путнипе путманнине палăртма май килмен.

Маларах Голланди Индийĕн бомбардировщикĕсем Балик—Папан çывăхĕнче (Борнео утравĕн хĕвелтухăçĕнчи çыранĕ) Япони суднисене атакăлани çинчен пĕлтернĕччĕ. Çакăнта Японин икĕ крейсерĕпе пĕр транспорчĕ çине 4 бомба тĕл тивнине палăртнă. Голланди Индийĕн пĕр бомбардировщикĕ хăйĕн базине таврăнман.

ЯПОНИ ПĔЛТЕРĔВĔСЕМ

ТОКИО, январĕн 27-мĕш. (ТАСС). Малайăра Япони войскисем кăнтăр еннелле куçса пыраççĕ. Çапăçусем Джохор Бару районĕнче пулса иртеççĕ. Виçĕмкун çĕрле Япони авиацийĕ Рангун çине икĕ хутчен тапăннă. Аэродром çине бомбăсем пăрахнă.

Японипе Китай хушшинчи вăрçă

Кăнтăрти Китайра Китай войскисем, Кантонран хĕвелтухăçнелле выртакан районра Таншуй хулине йышăннă хыççăн, малалла çĕнтерсе пыраççĕ. Вĕсем юлашки кунсенче Кантон—Коулун чугун çулĕ тăрăх тата темиçе пункта йышăннă. Японецсен ирĕксĕрех кăнтăралла чакма лекнĕ.

Макасак проливĕнчи çапăçу çинчен хаçатсенче мĕн çыраççĕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Ассошиэйтед пресс агентствин Вашингтонри корреспонденчĕ Макасак проливĕнче, Борнео утравĕпе Цейлон утравĕ хушшинче пыракан тинĕсри çапăçу çинчен тĕплĕнрех çапла пĕлтерет: Америкăпа Голландин тинĕсри тата сывлăшри вăйĕсем Япони карапĕсене вăйлăн атакăлаççĕ. Паллă сведенисем тăрăх, Японин 11 суднине путарнă, 17 суднине сиен кÿнĕ. Кунсăр пуçне, çирĕплетмен сведенисем тăрăх, Японин татах тепĕр 6 суднине путарнă пулмалла. Çав операцисенче Япони суднисем умне питĕ пысăк йывăрлăхсем тухса тăнă. Хăшпĕр сведенисем пĕлтернĕ тăрăх, Японин авианосецне путарни Япони суднисен караванĕн положенийĕ питех те йывăрланнине кăтартса парать. Макасак проливĕнче пулса пыракан çапăçусенче Япони авиацийĕ çавтери вăйсăр хирĕç тăнă.

Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ: Макасак проливĕнче Японин транспорчĕсене путарнине пула Япони салтакĕсем 25.000 çын пĕтнĕ, тесе шутлать.

Голландин Анете агентстви пĕлтернĕ тăрăх, паллă çынсем çапла кăтартса параççĕ: Голланди Индийĕн авиацийĕ январĕн 23-мĕшĕнче Макасак проливĕнче путарнă Японин пысăк çар карапĕ линкор пулнă пулмалла. Анете агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Макасак проливĕнче 3 кун хушшинчи çапăçусенче Америкăпа Голландин вăйĕсем японецсене мĕнпурĕ 11 çар карапне тата 17 транспортне путарнă е питĕ пысăк сиен кÿнĕ. Кунсăр пуçне Японин 13 самолетне персе антарнă.

Гитлеровецсем Югославире Рудникпе Ужице хулисене пĕтĕмпех аркатнă

ЛОНДОН, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). Кунта çитнĕ сведенисем тăрăх, Югославире Белградран 100 миля кăнтăр еннерех тăракан Рудник хулине гитлерла çынçиенсем артиллерирен персе тата пикировка тăвакан бомбардировщиксенчен бомбăсем пăрахса пĕтĕмпех çĕмĕрсе тăкнă. Югославин Лондонри правительстви илнĕ хыпарсем тăрăх, хулара пĕр чĕрĕ çын та тăрса юлман. Ужице хулинчен те ишĕлчĕк кăна тăрса юлнă. Хулари халăха нимĕçсем çĕршерĕн пере-пере пăрахнă. Белградра продовольстви пачах çук. Пĕчĕк ачасем сĕт çуккипе аптăраççĕ. Хулара тиф чирĕ вăйлăн сарăлнă.

Румынипе Венгри войскисем пĕр-пĕринпе тытăçса илнĕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Оверсис-ньюс агентствин Женеваври корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Румынипе Венгрин чикĕре тăракан войскисем пĕр-пĕринпе тытăçса илнĕ. Сăлтавĕ çакă пулнă: нимĕçсем Венгрирен венгерсен чылай дивизийĕсене хăйсене пама ыйтсан, Венгрия ун вырăнне Трансильванине пĕтĕмĕшпех хăйне пама ыйтнă. Çак хыпара Румыни войскисем пĕлнĕ хыççăн малта асăннă тытăçу пуçланса кайнă.

Гитлеровецсем Испанипе Италин продовольствине вăрлаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, январĕн 26-мĕш. (ТАСС). Оверсис ньюс агентствин Испани чиккинче пурăнакан корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, нумаях пулмасть Испани валли килекен продуктсене нимĕçсем вăрланă та, Аликанте портĕнче пушатса, Германин суднисем çине тиенĕ. Корреспондент çапла пĕлтернĕ: Итали валли хатĕрленĕ продовольствие те Германия çавăн пекех вăрласа тăрать, тенĕ.

Бразилипе тĕнĕл держависем

ЛОНДОН, январĕн 28-мĕш. (ТАСС). Лондонри радио çапла пĕлтерет: Бразили правительстви тĕнĕл держависемпе дипломатиллĕ çыхăну тытма пăрахни çинчен официальнăй йĕркепе пĕлтернĕ.

Ливири вăрçă

ЛОНДОН, январĕн 27-мĕш. (ТАСС). Англин Çывăх Хĕвелтухăçĕнчи çар вăйĕсен командованин черетлĕ коммюникинче çапла каланă: январĕн 25-мĕшĕнче Англи войскисем противника хирĕç Киренаика районĕнче çапăçнă. Çапăçусен центрĕ Антелатран хĕвелтухăçнелле куçнă. Юлашки хыпарсем тăрăх, Англи войскисем Мсусран çурçĕрелли тата çурçĕр-хĕвелтухăçнелли районра противникăн колоннисемпе хире-хирĕç тăраççĕ.

Фашизма хирĕçле литературăна масса хушшине

ЭЛĔК. Фашизма хирĕçле литературăна халăх хушшинче сарасси агитаципе пропаганда ĕçĕнче паллă вырăн йышăнса тăрать. Çакă вăл ялта культурăллă ытти мероприятисем туса пынипе пĕрлех агитаципе пропаганда ĕçне те тивĕçлĕ вырăна лартма пулăшать. Кĕрешÿре—çĕнтерÿсем тума, ĕçре—ÿсĕм хыççăн ÿсĕм тума хавхалантаракан литературăна хăвăртрах масса патне çитересси суту-илÿ организацийĕсен паянхи ответлă задачи пулса тăрать.

Калас пулать, фашизма хирĕçле литературăна масса хушшине сарас тĕлĕшпе районра пачах та çителĕксĕр ĕçлеççĕ. Райцентрта культмаг пур. Анчах вăл икĕ уйăх ытла ĕнтĕ хупă ларать. Райсоюз председателĕ К. Нилов юлташ ĕçлеме «ерçмен» пирки культмагра суту-илÿ тума продавец тупаймасть.

Совет халăхĕн фашизма хирĕç пыракан отечественнăй вăрçи пуçланнăранпа Чăвашгосиздат вăрçăри паттăр боецсен мухтавлă çĕнтерĕвĕсене çутатса паракан кĕнекесене чылай кăларчĕ. Çав кĕнекесене кÿрсе килес пирки райсоюз шутласа та пăхман.

Вулав çурчĕсемпе библиотекăсем районра пурĕ 25 шутланаççĕ. Çав вулав çурчĕсемпе библиотекăсенче пĕринче те паянхи кунпа тÿрех çыхăнса тăракан литература çук. Сăмах майĕн калас пулсан, чылай вулав çурчĕсем вутăсăр лараççĕ. Пиçенер тата Писĕп ялĕсенчи вулав çурчĕсене кĕркуннеренпе пачах та хутман. Вутланри вулав çуртне колхоз правленийĕн канцелярийĕ йышăннă.

Вулав çурчĕсен заведующийĕсенчен чылайĕшĕсем хăйсен паянхи задачисене ăнланмаççĕ. Çуракине хатĕрленес тĕлĕшпе вулав çурчĕсен хăйсен сăнсăпатне кăтартмалла. Стена хаçачĕсем йĕркеллĕн тухса тămаççĕ е пачах та тухмаççĕ. Вулав çурчĕсен заведующийĕсене районран кăтартусемпе пулăшу парса тăни çук. Вĕсемпе виççĕмĕш уйăх ĕнтĕ пĕр канашлу та ирттермен. Ноябрь уйăхĕнчен вара райçутĕç пайĕ политинспекторсăр ларать.

Райсоюзпа райçутĕç пайĕ çителĕксĕр ĕçлесе пынине пула, районри самодеятельнăй драмкружоксем те хăйсен ĕçĕсене паянхи кун ыйтăвĕсемпе çыхăнтарса пыраймаççĕ. Районри 4 вăтам шкул тата 14 тулли мар вăтам шкул çумĕнче драмкружоксем пур. Çавăн пек кружоксем вулав çурчĕсем тата райцентрти больница çумĕнче те пур. Вĕсем паянхи куна кирлĕ пьесăсемсĕр лараççĕ. Çĕнĕ пьесăсем çук пирки ĕнтĕ больница çумĕнчи драмкружок çак кунсенче те «Çамрăксем» тата «Ывăлĕ» йышши художество енчен пахалăхсăр пьесăсемпе усă курать.

Драмкружоксен хăйсен репертуарне çĕнĕ пьесăсемпе анлăлатмалла. Фашизма хирĕçле литературăна халăх хушшинче çине тăрсах сармалла.

М. Я.

Виçĕ красноармеецăн амăшĕ

ШĂМĂРШĂ. Шамкай ялсоветне кĕрекен «Светлый путь» колхозри Анастасия Семеновна Белова колхозницăн виçĕ ывăлĕ отечественнăй аслă вăрçăн фрончĕсенче фашистла вăрă-хурахсене хирĕç çапăçаççĕ. Пĕр ывăлĕ унăн летчик, тепри—танкист, виççĕмĕшĕ—рядовой красноармеец.

Анастасия Семеновна тăван çĕршыва хÿтĕлеме çакăн пек паттăр та хăюллă ывăлсем ÿстерсе çитĕнтернĕшĕн чĕререн савăнать. Хăйĕн юратнă ывăлĕсем ун патне тăтăшах саламсем яраççĕ, нимĕç оккупанчĕсене хирĕç хăйсен пурнăçĕсене шеллемесĕр çапăçни çинчен çырса пĕлтереççĕ. Тăван ывăлĕсен çырăвĕсем Анастасия Семеновнăн кăмăлне татах та çĕклеççĕ, ăна колхозра, ĕç фронтĕнче тăрăшса ĕçлеме хавхалантараççĕ.

Вăл çамрăк мар ĕнтĕ—64 çула çитнĕ. Анчах çапах та ĕçрен юлмасть. Тылри ĕçсене вăхăтра туса пырса, фронта пулăшас ĕмĕтпе колхозри пур ĕçсене те хăйĕн кăмăлĕпе хутшăнать, ĕçшĕн пĕтĕм вăй-халне парать.

— Фашистла ирсĕрсене хăвăртрах пĕтерсе тăкассишĕн хамăн вăй çитнĕ таран тăрăшатăп,—тет ватă колхозница, виçĕ красноармеецăн амăшĕ Белова юлташ.

Чăнахах та вăл хăйĕн пĕтĕм вăйне курса ĕçлет. Ытти колхозниксемпе колхозницăсене лайăх ĕç тĕслĕхĕсем кăтартать. Халь колхозра авăн çапаççĕ. Çак ĕçре Анастасия Семеновна куллен хăйĕн нормине 180—250 процент таран тултарать. Вăрçă пуçланнăранпа вăл 250 ĕçкунĕ тунă.

Ф. КРАСНОВ.

Пысăк активлăх

ШĂХАСАН. Троицк ялсоветне кĕрекен колхозсенчи колхозниксем 1942 çулшăн укçа-тенкĕ парăмĕсене активлăн тÿлеççĕ. «Свет» колхозри Ф. Семенова, И. Григорьева, А. Михеева, П. Кузнецова колхозницăсем кăçалхи культсборпа самообложени укçисене тÿлесе татнă.

Çавăн пекех «Майăн 1-мĕш» колхозри Н. Гаврилова, В. Максимов, Т. Яковлев тата ытти колхозниксем те 1942 çулшăн культсбор тата самообложени укçисене парса татнă.

Çĕнĕ кĕнекесем

Чăвашсен Государство Издательствин ача-пăча литературин секторĕ кĕçĕн çултипе вăтам çулти ачасем валли çакăн пек кĕнекесем кăларчĕ:

А. Афанасьев.—Мужик улпута мĕнле вĕрентнĕ. Чăвашгосиздат, 1941 ç., 16 стр., хакĕ 50 пус.

Кĕнекене улпутсемпе пупсен сăткăнлăхне тата мужиксем чеелĕнсе вĕсене епле вĕрентнине кăтартса паракан вырăс халăхĕн паллă виçĕ халлапне кĕртнĕ. Кашни халлапнех ÿкерчĕксемпе илемлетнĕ.

В. А. Жуковский.—Ată тăхăннă кушак аçи. Чăвашгосиздат, 1941 ç., 16 стр., хакĕ 50 пус.

Халăх хушшинчи паллă халлапа вырăссен ĕлĕкхи поэчĕ В. А. Жуковский сăвăласа, якатса кăларнă пулнă. Халлапра чее кушак аçи, сăткăн Карабаз-Маркиза пĕтерсе, хăйĕн чухăн хуçине пуйтарни çинчен каланă. Халлапне чăвашла Уçли Ваçлейĕ куçарнă.

К. Станюкович. — Шыва ÿкнĕ çын. Чăвашгосиздат, 1941 ç., 24 стр., хакĕ 75 пус.

Вăтам çулти ачасем валли çырнă пысăках мар калав. Кунта карап çинче, тинĕсре пулса иртнĕ ĕлĕкхи ĕç çинчен çырнă. Прошка ятлă матрос, хăйне юлташĕсем малтан хисеплемен пулин те, вăл хăй юлташĕсене хисеплет, ăнсăртран шыва анса кайнă пĕр матроса хăйне шеллемесĕр вилĕмрен çăлать.

М. Ю. Лермонтов. — Мцыри. Чăвашгосиздат, 1941 ç., 44 стр., хакĕ 1 тенкĕ.

Мцыри— грузин сăмахĕ. Вăл монастир службине кĕрсех çитеймен манах тенине пĕлтерет. Асăннă поэмăра ĕлĕкхи вăхăтра этем хăйĕн ирĕклĕхĕшĕн паттăррăн кĕрешнине кăтартса панă. Поэмăна Ухсай Яккăвĕ куçарнă.

Ответлă редактор В. Я. ЯКОВЛЕВ.

Считать недействительными

утерянную КРУГЛУЮ ПЕЧАТЬ и ШТАМП Чебоксарского (гор)месткома Союза работников пожарной охраны.

МЕСТКОМ

Открыт прием подписки на журналы на 1942 год

№№ п.-п.	НАИМЕНОВАНИЕ ИЗДАНИЙ	ПОДПИСНАЯ ЦЕНА 1 м.	3 м.	6 м,	12 м.
	Принимается без лимитов:				
1.	Бюллетень экспериментальной биологии и медицины	—	—	18—	36—
2.	Вопросы нейрохирургии	—	—	12—	24—
3.	Вестник офталмологии	—	—	18—	36—
4.	Гигиена и здоровье	—	—	12—	24—
5.	Журнал микробиологии, иммунобиологии и эпидемиологии	—	—	24—	48—
6.	Клиническая медицина	—	—	18—	36—
7.	Медицинская паразитология и паразитарные болезни	—	—	13—50	27—
8.	Невропатология и психиатрия	—	—	21—	42—
9.	Педиатрия	—	—	10—50	21—
10.	Проблемы туберкулеза	—	—	10—50	21—
11.	Стоматология	—	—	9—	18—
12.	Фармакология и токсикология	—	—	9—	18—
13.	Фармация	—	—	9—	18—
	В пределах лимитов:				
1.	Наука и жизнь	—	9—	18—	36—
2.	Октябрь	—	15—	30—	60—

Подписка принимается до 7 февраля исполнением с января месяца.

«СОЮЗПЕЧАТЬ».

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5. Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редактор заместителĕн — 3—97, редакци секретарĕн — 4—40, пропаганда пайĕн — 4—97, парти пурнăç пайĕн — 7—97, ялхуçалăхĕпе промышленность пайĕсен — 6—88, çырусемпе рабселькорсен пайĕн — 2—30, дежурнăйăн — 6—23, «Ленин çулĕпе» журналăн — 0—85, издательство конторин—0—23.

НТ 360 Типография №1 Управления издательств и полиграфии при СНК ЧАССР. Заказ № 2. Ф 6. 58 84 п. л.